26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
АВГУСТ
7
ШĂМАТКУН
157(6394) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Уборка ĕçĕсен хăвăртлăхне ÿстерер, дисциплинăна ытларах çирĕплетер!

Августăн 5-мĕшĕнче радио пĕтĕм совет халăхне савăнăçлă хыпар пĕлтерчĕ. Пирĕн войскăсем, нимĕç захватчикĕсене хирĕç ăнăçлăн çапăçса пырса, нимĕç сыхçиенĕсен шусмарĕнчен Орелпа Белгород хулисене ирĕке кăларчĕç. Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсемпе командирĕсене тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн, гитлерла захватчиксене хирĕç геройла çапăçнăшăн тав туса приказ пачĕ. Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ пысăк çĕнтерĕвне тăван çĕршывăн тĕп хули — Мускав 120 тупăпран харăс 12 хутчен персе саламларĕ.

Хĕрлĕ Çар воинĕсен паттăр кĕрешĕвĕ пĕтĕм халăхăн шухăш-кăмăлне çĕклет. Тырри ĕççынисем, колхозникĕсемпе колхозницăсем сулхусăн приказне, Хĕрлĕ Çарăн пысăк çĕнтерĕвне уборка ĕçĕсене татах та ытларах вăйлатнипе ответлеççĕ.

Пирĕн республикăри нумай колхозсем, пиншер колхозникĕсемпе колхозницăсем çĕршывпа Хĕрлĕ Çар умĕнчи хăйсен тивĕçне аван ăнланаççĕ. ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ пирĕн Ленин орденлĕ Чăваш республикине çуракинчи çитĕнÿсемшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илмелли кандидатсен шутне кĕртрĕ. Çак аслă тивĕçе пирĕн ÿкермелле мар. Уборка ĕçĕсенче çĕнĕрен пысăк ÿсĕмсем туса Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне хамăр алла илме çине тăрса кĕрешмелле.

Августăн 4-мĕшĕ тĕлне (виçĕ районсăр пуçне) эпир мĕнпурĕ 125.155 гектар ытла кĕрхи тата çурхи тырăсене вырса пухнă. Малта пыракан районсем паянлыранах кĕрхи тырăсене вырса пĕтерсçĕ. Иртнĕ çулта туна йăнăшсене вăхăтра шута илсе, Куславкка, Елчĕк, Комсомольски, Вăрмар, Чкаловски, Тăвай тата ытти хăшпĕр районсем уборка пуçламĕшĕнчех машинăсемпе, кĕреплеллĕ çавасемпе анлăн усă курса, ĕç тухăçлăхне ÿстерчĕç. Куславкка районĕнчи колхозсем августăн 5-мĕшĕ тĕлне пĕтĕм тырпултан 43,2 процентне вырса пухнă. Жнейкăсемпе кунта 1210 гектар, кĕреплеллĕ çавасемпе 235 гектар вырса пухнă, 137 гектар тыррине капансене хывнă, 96 гектар тыррине çапса государствăна 505 центнер панă.

Елчĕк районĕнчи колхозсенче хирте кулленех 236 жнейка ĕçлет. Августăн 4-мĕшĕ тĕлне кунта 12.143 гектар тырă вырнă, вăл шутра жнейкăсемпе вырни — 5821 гектар. Комсомольски районри нумай колхозсенче тырра уйра çĕр выртса-тăрсах выраççĕ. Çумăрлă çанталăкра та ĕç тухăçлăхĕ чакмасть, кунран-кун вăйланса пырать. Тырра типĕтес ĕçе аван организациленĕ. Юлашки вăхăтра 31 колхоз нÿрĕ тырра типĕтсе çапма авăнсем туса лартнă, авăн çапас ĕç хăвăрт пулса пырать.

Анчах уборка ĕçĕсем пур çĕрте те кирлĕ хăвăртлăхпа тата ăнăçлăн пулса пыраççĕ темелле мар-ха. Ку вăл, чи малтан, хăшпĕр колхозсем ĕç вăйне кирлĕ пек вырнаçтарса тухманнинче тата ĕç дисциплинине кирлĕ пек çирĕп тытманнинче курăнать. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура хамăрăн малти вырăна çирĕплетсе хăварас тесен, пирĕн юлса пыракан колхозсене малта пыракан колхозсемпе танлаштармалла.

Тăвай районĕнчи «Красное Сормово» колхоз тырă вырас ĕçе чăтма çук чăсса пырать. Колхоз председателĕ вырăнĕнче ĕçлекен С. Матвеев юлташăн ĕçре çавăрăнуçăллăх çук. ВКП(б) Тăвай райкомĕ çакăн çинчен пĕлмест мар, анчах вăхăтра тырса пулăшмаççĕ. Бригадирсем çитмеççĕ, колхозра ĕç дисциплини япăхса кайнă. Ĕçе шута илсе пыманнине кура колхозниксем ĕçе тухма пăрахнă. Мĕнпур колхозниксене ĕçе кăларас чухне, колхоз правленийĕ колхоз тыррине аякран тара тытса вырттарма тытăннă.

Элĕкри «Большевик» колхозра ырăш тăкăнать, анчах пырмаççĕ. Уйрăм колхозниксем ĕçрен пăрăнса çÿрени çине кунта сÿрĕккĕн пăхаççĕ. Августăн 5-мĕшĕнче тырă вырма кунта иркхине 9 сехетре çеç тухнă. Япăх ĕçленĕшĕн Прохоркина колхозницăна бригадиртан кăларнă. Халĕ вăл ĕçе пачах тухмасть. Çакăн пек кирревсĕрлĕхпе кунта килĕшсе лараççĕ.

Сĕнтĕр, Нишлей, Шупашкар районĕсенче те çакăн пек тĕслĕхсем чылай. Ку районсенче нумай колхозсем тырă вырма кая юлса тухни пĕтĕм республикăна каялла туртать. Иртнĕ çул япăх мар ĕçленĕ çак районсем кăçал уборка ĕçĕсене вăраха яраççĕ. Районри руководительсен, колхозсемпе ялсовет исполком председателĕсен ĕçе халех тÿрлетмелле.

Малта пыракансен ĕç опытне анлăн сарни кирлĕ. Ĕçе тĕрĕс шута илсе пырассине йĕркелемелле, ĕçшĕн хушса тÿлемелле, уборка вăхăтĕнче колхозниксене аванс памалли йĕркесене тĕрĕс пурнăçласа пымалла. Ĕç дисциплинине çирĕплетмелле, уборка ĕçне кашни колхозникпе колхозницăна явăçтармалла, агитациллĕ-ăнлантарулла ĕç пур колхозсенче те тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 5-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 5-мĕшĕнче пирĕн войскăсем урамсенче пулса иртнĕ хаяр çапăçусене хыççăн ОРЕЛ хулипе чугунçул узел йышăнса илнĕ. Орелран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем кун каçиччен халăх пурăнакан 30 пункта ытла йышăнса илнĕ.

Августăн 5-мĕшĕнчех пирĕн малалла тапăнса пыракан войскăсем хаяр çапăçусем хыççăн БЕЛГОРОД хулине йышăнса илнĕ.

Орела тата Белгорода ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче çак войскăсем уйрăмăнах палăрнă: генерал-лейтенантăн БАГРАМЯНĂН, генерал-лейтенантăн БЕЛОВĂН, генерал-лейтенантăн ГОРБАТОВĂН, генерал-лейтенантăн КОЛПАКЧИН, генерал-лейтенантăн РОМАНЕНКĂН, генерал-лейтенантăн ПУХОВĂН, генерал-лейтенантăн ГАЛАНИНĂН генерал-лейтенантăн РЫБАЛКĂН, генерал-лейтенантăн ЧИСТЯКОВĂН, генерал-лейтенантăн ЖАДОВĂН, генерал-майорăн МАНАГАРОВĂН, генерал-лейтенантăн КРЮЧЕНКИНĂН, генерал-лейтенантăн ШУМИЛОВĂН, танковăй войскăсен генерал-лейтенанчĕн КАТУКОВĂН, танковăй войскăсен генерал-лейтенанчĕн РОТМИСТРОВĂН, танковăй войскăсен генерал-лейтенанчĕн БОГДАНОВĂН войскисем; Авиаци Маршалĕн ГОЛОВАНОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн НАУМЕНКĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн РУДЕНКĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн КРАСОВСКИН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ГОРЮНОВĂН.

Донбасра, ВОРОШИЛОВГРАДРАН КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇНЕРЕХРИ районра, çаплах вырăнти çапăçусем пынă.

ЛЕНИНГРАД фронтĕнче, Мга хулинчен çурçĕртерехри тата хĕвелтухăçнерехри районсенче, разведчиксем вăйлăн çапăçнă.

Августăн 4-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче пирĕн войскăсем нимĕçсен 98 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе тăшманăн 168 самолетне ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Совет войскисем урамсенче пулса иртнĕ хаяр çапăçусем хыççăн Орел хулине йышăнса илнĕ. Нимĕçсем хула урамĕсенче укрепленисем тунă, çуртсене минăсем хурса сирпĕнтере-сирпĕнтере янă, автоматчиксене нÿхрепсене тата чул çуртсен чердакĕсем çине лартнă, пиртĕ хаярăн хирĕç тăнă. Пирĕн боецсем, штурмлакан ушкăнсене найланса, пĕр квартал хыççăн тепĕр квартала тăшманран тасатса пынă. Паян нимĕçсене пур районсенчен те хăваласа кăларнă, çапла вара Орела нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ тата нумай çынна тыткăна илнĕ.

Орелран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре совет чаçĕсем тăшманăн контратакисене сире-сире янă. Пĕр соединени хаяр çапăçусенче 1000 гитлеровеца ытла вĕлернĕ, нимĕçсен 16 танкне, 22 орудине тата 8 транспортерне пĕтерсе тăкнă. Малалла куçса пырса, пирĕн боецсем боеприпассен 6 складне тытса илнĕ.

Орелран кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, малалла куçса, халăх пурăнакан 30 пункта ытла йышăнса илнĕ. Халăх пурăнакан çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тăшманран 12 танк, 19 оруди тата горючи складне тытса илнĕ.

Пирĕн авиаци нимĕçсен каялла чакакан войскисем çине бомбăсем пăрахнă, вĕсене штурмланă. Тăшмана сыхсем енĕпе те, техника тĕлĕшĕнчен те пысăк сухатусем тÿстернĕ. Пирĕн авиаци пыра-пыра çапнă çулсем çинче тăшманăн çунакан тата çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ автомашинисем, орудийĕсем тата ытти техники купаланса выртать.

Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен 72 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Пирĕн войскăсем вăйлăн çапăçнă хыççăн Белгород хулине йышăнса илнĕ. Çав хулашăн пынă çапăçура тăшманăн 3.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Боеприпассен склачĕсене тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тепĕр участокра пĕр танковăй соединени тăшманăн пĕр паха çулне татнă. Гитлеровецсем тунă контратакăсене сирсе янă, вĕсене пысăк сухатусем тÿстернĕ. Тулли мар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен 40 танкне тата хăй тĕллĕн çÿрекен 5 орудине пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, трофейăсем хушшинче 17 танк тата хăй тĕллĕн çÿрекен 4 оруди пур. Пирĕн чаçсем тăшманăн 2 артиллери полкĕн пĕтĕм пурлăхне тытса илнĕ.

Сывлăшри çапăçусенче кун каçа нимĕçсен 66 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Донбасра, Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра, вырăнти çапăçусем пулса пынă. Ирхине артиллери вăйлăн персе тăнă хыççăн пĕр соединени чаçĕсем тăшман позицийĕсене атакăланă та нимĕçсен пĕрремĕш ретри траншейисене йышăнса илнĕ. Нимĕçсен 6 танкне тата 400 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн летчиксем чугунçул эшелонĕсем çине тата тăшман танкĕсемпе пехотин колоннисем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахса, темиçе поезда çĕмĕрнĕ, нумай танк тата 150 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

* * *

Изюмран кăнтăртарахра нимĕçсем хăйсен резервĕсене илсе пынă та икĕ кун хушшинче хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла тавăрма хăтланнă. Пирĕн чаçсем тăшман танкĕсемпе пехотин 23 контратакине сирсе янă. Çав çапăçусенче нимĕç пехотине пĕр полкран кая мар пĕтерсе тăкнă, тăшман танкĕсемпе орудийĕсене нумай çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Совет летчикĕсем горючин 2 складне тата боеприпассен темиçе складне сирпĕнтерсе янă, сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 11 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем тăшманăн оборона сооруженийĕсемпе сывăхри тылне персе тăнă. Артиллеристсемпе минометсенчен персе, нимĕçсен 29 дзотне тата 4 наблюдательнăй пунктне ишсе антарнă, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă тата темиçе артиллери батарейине пусарса лартнă. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 12 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Ровно облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ июлĕн 28-мĕшĕнче халăх пурăнакан пысăк пунктра тăракан тăшман гарнизонне сасартăк атакăланă. Çапăçура нимĕç гарнизонĕн пысăк пайне вĕлерсе пĕтернĕ. Чĕрĕ юлнă гитлеровецсем тарса саланнă. Нимĕçсен 130 салтакĕпе офицерне, бургомистра тата жандармери начальникне вĕлернĕ. Партизансем 80 совет гражданне тĕрмерен ирĕке кăларнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 3 пулемет, 28 автомат, 100 винтовка ытла, 13 радиоприемник, продовольстви складне тата тумтирсемпе атă-пушмаксен складне тытса илнĕ. Чернигов облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ июлĕн 26-мĕшĕнче тăшманăн карательнăй экспедицийĕпе çапăçнă. Хаяр çапăçура партизансем венгерецсен 106 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Темиçе сынна тыткăна илнĕ, 5 пулемет, 70 винтовкăпа автомат, 300 граната, 25.000 патрон тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Тăшманăн подводнăй флочĕ пысăк çухатусем тÿснине пула нимĕçсен Норвегире тăракан подводнăй лодкисен экипажĕсем боевой заданисене пурнăçлассинчен тĕрлĕ майпа пăрăнаççĕ. Хăшпĕр экипажсем приборсене, материальнăй чăса юри пăсаççĕ, лодкăсене юрăхсăра кăлараççĕ. Тромсейра пĕр подводнăй лодкăна питĕ пысăк сиен кÿнĕ, вăл вара шыва путнă. Отарангер çывăхĕнче пĕр подводнăй лодкăн командине ишсе кайма килĕшмен. Вара унăн экипажне командирĕпе пĕрле арестленĕ.

Июль уйăхĕнчи плана 150 процент пурнăçланă

КУСЛАВККА. Августăн 5-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Комбинат коллективĕ июль уйăхне производство программине 150 процент тултарнипе вĕçлерĕ. Калашников юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри Белобородов, Злочевский малярсем ĕç нормине яланах 200 процент тултарса ĕçлерĕç. Çак цех начальникĕн заместителĕ Чумаков юлташ та кăтартуллăн ĕçлерĕ. Дружинин юлташ цехĕнчи столяр Ваареф, коммунист Микельсон юлташсем кулленхи задание 180—200 процент тултарса пычĕç. Пушкин юлташ цехĕнче ĕçлекен Нина Лебедева юлташ, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ трамотине илме тивĕçлĕ пулнăскер, задание кашни кунах 200 процент ытла тултарать.

Завод коллективĕ хĕле хатĕрленес енĕпе те чылай ĕçсем турĕ. Паянхи куна 21 пин кубометр вутă хатĕрленĕ. Рабочисем пурăнакан общежитисене хваттерсене юсанă. Подсобнăй хуçалăхри пахча-çимĕçсене уйрама 220 тонна пахча-çимĕç хумалăх овощехранилище туса пĕтерчĕ.

И. ПЕТРУЧЕНКО,
Заводри партбюро секретарĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Пирĕн землячка — комсомолка Галина Капитонова. Вăл Çĕрпÿ районĕнчи 1905-мĕш çул ячĕпе тăракан колхозран. Хĕрлĕ Çара хăй ирĕкĕпе кайнă. Халĕ вăл пĕр авиаполкри красноармеец-стрелок. Командовани заданийĕсене питĕ лайăх пурнăçа кĕртсе пынăшăн Капитонова юлташа «За боевые заслуги» медальпе наградăланă.
А. ГРАБОВСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Пирĕн земляк — красноармеец Х. Н. Андреев юлташ. Вăл Шупашкар районĕнчи Н. К. Крупская ячĕпе тăракан колхозран. Смоленск облаçĕнчи пĕр яла тăшманран туртса илесшĕн çапăçнă чухне уйрăмах палăрнăшăн Х. Н. Андреев юлташа Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă.
Л. ДОРЕНСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Совет войскисем Орел хулине йышăнса илчĕç

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, августăн 5-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Паян урамсенче хаярран çапăçнă хыççăн пирĕн войскăсем Орел хулипе чугунçул узелне йышăнса илчĕç. Ку вăл тата тепĕр питех те пысăк çĕнтерÿ пулса тăрать. Совет войскисем çулла ăнăçлăн наступлени тума пултараймаççĕ, тесе гитлеровецсем сарнă халлапа Хĕрлĕ Çар пĕтĕмпех саплаласа ячĕ.

Фашистсем Орел тавраШĕнчи вырăна питĕ паха вырăн тесе шутланă. Унта тăшманăн резервĕсем пухăнса тăнă. Нимĕçсем унта икĕ çул хушши укрепленисем тунă, оборонăн кăткăс системине туса хунă. Июлĕн 5-мĕшĕнче Орелпа Белгород районĕнчен хăйсен çуллахи наступленине пуçласа ячĕç, тăшман пирĕн Курск пĕккинчи войскăсене çавăрса илесшĕн шухнă. Гитлеровецсен планĕсем пăчланса ларчĕç. Нимĕçсем хĕснине сирсе ярса, совет войскисем хăйсем наступлени пуçласа ячĕç, тăшмана питĕ пысăк çухатусем тÿстерчĕç.

Совет çыннисем çав тери пысăк хастарлăхпа, паттăрлăхпа çапăçрĕç. Тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса тата унăн контратакисене сирсе пырса, пирĕн войскăсем халăх пурăнакан темиçе çĕр пункта ирĕке кăларчĕç. Мценск тата Болхов хулисене йышăнса илсе, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем малалла ăнăçлăн тапăнса пымашкăн кирлĕ условисем туса хучĕç.

Тăшман оборонине меллĕн вăркăнавăркăна кĕрекен пирĕн чаçсем хĕснине пула нимĕçсен хăйсен оборона рубежĕсене пăраха-пăраха хăвармалла пулчĕ. Августăн 3-мĕшĕнче совет войскисем хула патне пырса тăчĕç. Хаярран çапăçнă хыççăн пирĕн боецсем хула урамĕсене вăркăнса кĕрсе кайрĕç. Çав хаяр çапăçусенче тĕрлĕ йышши войскăсем пĕр-пĕринпе лайăх сыхăнса кĕрешрĕç. Пехотинецсен атакисене артиллеристсем пулăшса пычĕç. Оруди расчечĕсем, пехотăпа пĕрле пырса, тăшманăн огневой точкисене çĕмĕрсе пычĕç. Августăн 5-мĕшĕнче тăшман хирĕç тăнине пĕтерсе лартнă. Орел каллех совет хули пулса тăчĕ.

Орелшăн пынă çапăçусенче 5-мĕш, 129-мĕш тата 380-мĕш стрелковăй дивизисем ĕмĕр манми чапа тухрĕç, вĕсем, Орел хулине чи малтан вăркăнса кĕрсе кайса, ăна нимĕç пусмăрçисенчен тасатрĕç.

Гитлерла ирсĕрсем хулана çĕмĕрнĕ. Орел хулинчи чи лайăх çуртсене — культура дворецне, ĕç дворецне, шкулсене, библиотекăсене, ача яслийĕсене фашистсем çунтарса, сирпĕнтерсе янă. Орел çыннисем хăйсене ирĕке кăларакансене — Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсене — çав тери хаваслансa кĕтсе илчĕç.

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, августăн 2-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Темиçе кун каярах кунта вырăнти çапăçусем пыратчĕç, çав çапăçусем вăхăтĕнче пирĕн чаçсем, малалла куçса, хăйсен позицийĕсене лайăхлатрĕç. Халĕ ку вырăнсем пысăк та хаяр çапăçусен вырăнĕсем пулса тăчĕç.

Чылай хĕсĕк участокра нимĕç командованийĕ пысăк вăйсем пухса тăратнă. Вăл пехота полкĕсене, вуншар танксене, пысăк йышлă авиацие çапăçăва кĕрте-кĕрте ярать. Пирĕн чаçсем артиллерипе минометсенчен пĕлсе персе тăни фашистсен танкĕсемпе пехотин çулне пÿлсе лартать. Тăшмана бронебойщиксемпе пехотинецсем вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ. Противникăн войскисемпе вăрçă техники пухăнса тăнă вырăнсене совет авиацийĕ татти-сыпписĕр бомбăсем пăрахать. Сывлăнра хаяр тытăçусем пулса иртеççĕ. Совет летчикĕсем ĕнер тăшманăн 34 самолетне пĕтерсе тăкрĕç. Летчиксем бомба пăрахнине пула, противник кашни кунах вуншар танксемпе автомашинăсем, войскăсем нумай çухатать.

Ĕнер пĕр участокра противник темиçе атака турĕ, пысăк йышлă пехотăпа тата 60—80 танка атакăна кĕртсе ячĕ. Противникăн пур атакисене те, ăна пысăк çухатусем кÿрсе, сирсе янă. Тепĕр участокра старши лейтенант Давыдов ертсе пыракан противотанковăй тупăсен батарейи 12 танкăн атакине сирсе ячĕ, çав танксенчен 4-шне çунтарса янă тата персе çĕмĕрнĕ.

Халăх пурăнакан пунктшăн пынă çапăçура танк командирĕ кĕçĕн лейтенант Прокопцев тата механик-водитель Галочкин нимĕçсен 2 танкне персе çĕмĕрнĕ тата виççĕмĕшне хăваласа янă. Пĕр чаçри артиллеристсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 40 танкне çунтарса янă тата 15 танкне персе çĕмĕрнĕ.

Совет воинĕсен çирĕплĕхĕпе паттăрлăхне, офицерсен составĕ пĕлсе кĕрешнине пула, Донбасра совет оборони никам кĕрсе каяйми çирĕп тăрать. Тăшман пысăк çухатусем тÿсет. Ĕнер, тулли мар даннăйсем тăрăх, 1.000 гитлеровеца ытла, танксемпе самолетсем нумай пĕтерсе тăкнă.

Тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем кăтартса панă тăрăх, противник кунта ытти участоксенчен васкасах войскăсемпе техника куçарса килет.

Вутă хатĕрлес ĕçе вăйсăрлатмалла мар

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обком бюровĕ йышăннă тăрăх çуллахи вăхăтра вутă хатĕрлемелли плана 75 процент таран пурнăçламалла.

Анчах та республикăра ку ĕç çителĕклĕ пулса пымасть-ха. Канаш хули, Вăрнар, Сĕнтĕрвăрри, Тăвай, Сĕнтĕр, Красноармейски районсемсĕр пуçне, ытти районсем вырăнти предприятисем валли вутă хатĕрлес ĕçре калама çук юлса пыраççĕ. Йĕпреç, Нишлей, Шăмăршă, Пăрачкав районĕсем тата Етĕрне хули вутă хатĕрлемелли плана 20 процентран мала пурнăçлайман. Йĕпреç районĕ 9 процент çеç пурнăçланă.

Вырăнти предприятисемпе учрежденисем валли вутă хатĕрлесси ответлă задача пулса тăрать. Çавăнпа та ку ĕçе вăйсăрлатмалла мар. Кашни районăн панă задание пурнăçлассишĕн кĕрешмелле. ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен вырăнти предприятисем валли вутă хатĕрлес ĕçе оперативно ертсе пымалла.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕ колхозниксене хавхалантарать

СĔНТĔР, августăн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Паян Елагин коммунист ертсе пыракан «1905 год» колхозра пур бригадăсенче те кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче кĕске вăхăтлă митингсем пулса иртрĕç.

Елагин юлташ колхозниксемпе колхозницăсене августăн 5-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Орелпа Белгород хулисене йышăнса илнĕ ятпа Верховнăй Главнокомандующи Сталин юлташ çав çапăçусенче палăрнă войскăсене саламласа панă приказа ăнлантарчĕ.

— Радио савăнăçлă хыпар кÿчĕ, — тесе пĕлтерет Елагин юлташ колхозниксемпе колхозницăсене. — Пирĕн Брянск фронтĕнчи войскăсем, Хĕвеланăç тата Центральнăй фронтсенчи войскăсем флангсенчен пулăшнипе, хаярран çапăçнă хыççăн Орел хулине йышăнса илнĕ. Çавăн пекех Çĕçенхир тата Воронеж фронтĕнчи войскăсем противник хирĕç тăнине çĕнтернĕ те, Белгород хулине йышăнса илнĕ.

Çак сăмахсене илтсен колхозниксемпе колхозницăсен чĕрийĕсем тулли савăнăçпа тулчĕç. Елагин юлташ приказа малалла ăнлантарать:

— Ĕнер, — тет вăл, — августăн 5-мĕшĕнче 24 сехетре пирĕн Тăван çĕршывăн столици — Мускав 120 орудирен 6 минута хушшинче вунникĕ хут харăс персе, Орелпа Белгорода ирĕке кăларакан хамăрăн паттăр войскăсене саламларĕ.

Елагин юлташ колхозниксемпе колхозницăсене тырпулсене пухса кĕртес ĕçре фронтри боецсем пекех хастарлăн ĕçлеме чĕнчĕ.

Митинг вĕçленнĕ хыççăнах уйхирте ĕç вĕреме тытăнать. Фронтовиксен арăмĕсем ĕçчен аллисем паян татах хĕрÿленчĕç. Нумаях пулмасть вĕсем Сталин юлташ Курск патĕнче çĕнтерÿ тунă войскăсене саламласа панă приказа сÿтсе явнă хыççăн обязательствăсем илнĕччĕ. Вĕсем хăйсен сăмахĕсене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ.

— Сталин юлташăн приказĕсем пире мĕнпур вăйран тăрăшса ĕçлеме хушаççĕ. Эпир вĕсене ĕç программи вырăнне йышăнатпăр. Манăн план тăрăх жнейкăпа 4-шар гектар вырмалла. Сулпуç приказĕпе хавхаланса, эпĕ халĕ куллен 6-шар гектар ытла выратăп. Уйхир ĕçĕ вĕçлениччен çапла ĕçлеме пулатăп, — тет колхоз машиновечĕ-комсомолец Виталий Елагин.

Çавăн пекех ытти колхозниксем те Сталин юлташăн приказне радиопа итленĕ хыççăн хăйсен ĕçри хастарлăхне ÿстерчĕç. А. Быстрова, М. Гусева, З. Кашина, А. Балуева колхозницăсем кунне 0,15-шер гектар вырас вырăнне 0,42—0,45-шер гектар выраççĕ. 4-мĕш класра вĕренекен В. Ильин 0,12 гектар вырать.

Колхоз ыран 102 гектар çинчи ырашпа вырса пĕтерет. Халĕ алăпа 58 гектар, жнейкăпа 23 гектар вырса пуçтарнă. Çак вăхăтрах 10 гектар çинчи кĕлтесене витнĕ итемсем çине кÿрсе çĕмеле хывнă.

Колхозниксем тăван çĕршывпа фронт валли тырă, аш-какай, пахча-çимĕç йĕркеллĕ парса тăрассишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлеççĕ.

М. КАРПОВ.

Финанс планне срокра пурнăçламалла

ТĂВАЙ. Кармал, Çĕнĕ Ишпуç, Чутай, Тĕмер ялсовечĕсем укçа-тенкĕ пухас енĕпе кайра пыраççĕ. Кармал ялсовечĕ иккĕмĕш кварталти финанс планне 50 процента яхăн çеç пурнăçлана. МТС-ра ĕçлекен трактористкăсем А. Туйрукова, П. Воробьева, М. Антонов юлташсем вăрçă налогне пĕр пус та тÿлемен. Ялсовет çумĕнчи налоговăй агенчĕсем хăйсен ĕçне тивĕçлипе туса пымаççĕ. Кармал ялсоветĕнчи налоговăй агент М. Сучкова юлташ 1942 çулхи парăмсемпе те татăлман. Уйрăм хуçалăхсенчен 1340 тенкĕ лаша налогне пухман. Çавăн пекех Тĕмер ялсоветĕнчи налоговăй агент Е. Владимирова та начар ĕçлет.

Укçа-тенкĕ хальхи вăхăтра мĕнле вырăн йышăнса тăнине пурте те пĕлмелле. Анчах та асăннă ялсовечĕсен руководителĕсем çакна ăнланса илмен пулмалла. Ку ĕçе ялсовет председателĕсен тивĕçлипе ертсе пымалла.

С. ФЕДОРОВА,
Райфо инспекторĕ.

Лайăх ĕçлекен продавщица

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Аслă Çĕрпÿелĕнчи сельпо магазинĕнче чылайранпа ĕнтĕ М. Коновалова юлташ продавщица пулса ĕçлет. Вăл яланах ĕçе тăрăшса туса пырать. Фронтран аманса килнĕ е ытти çынсем çавăх илме пыраççĕ. Анчах лавкана тырă халлĕн ярать. Ăна вăл мĕнле пулсан та çăнăхăн пама тăрăшать. Аякри армансене кайса та пулин авăртса килет. Лавкана килекен ытти тавара та вăхăтра йĕркеллĕ сутса тăрать.

КАШКĂР МИКУЛИ.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçĕн хăвăртлăхне машинăсем татса параççĕ. Кашни комбайна, кашни жнейкăна иртен пуçласа каçчен пĕр чарăнусăр ĕçлеттерер!

Чкаловски облаçри комбайнерсен чĕнĕвне сÿтсе-яваççĕ

ТĂВАЙ, августăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Чкаловски облаçри тырпулсене комбайнпа пухса кĕртес ĕçĕн мастерĕсемпе малта пыракан трактористсем Совет Союзĕнчи мĕнпур комбайнерсемпе трактористсене Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тухма чĕнсе каланине пирĕн МТС-ăн бригадисем хĕрÿллĕн сÿтсе-яваççĕ.

10-мĕш номерлă бригадăра чкаловецсен чĕнĕвĕпе тĕплĕн паллашрĕç, кăçал иртнĕ çултинчен те тухăçлăрах ĕçлеме пулса, кашни комбайнер, тракторист конкретлă обязательствăсем илчĕç. Комбайнер Петров Захар çапла каларĕ: „Чкаловски облаçĕнчи комбайнерсем пысăк обязательство илнĕ, вĕсем вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек пĕтĕм вăйран ĕçлеме тăрăшни курăнать. „Коммунар" комбайнпа 500 гектар тырă вырса кĕртесси—ку вăл опытлă комбайнерăн обязательстви. Эпĕ те нумай çул хушши ĕнтĕ комбайнпа ĕçлетĕп. „Коммунар" комбайнăн ĕç майĕсене пĕлетĕп. Чкаловски облаçĕнчи малта пыракан трактористсемпе комбайнерсен чĕнĕвне эпĕ йышăнатăп, кăçал хамăн комбайнпа 300 гектартан кая мар тырă пухса кĕртме сăмах паратăп тата ĕçĕн лайăх пахалăхĕшĕн кĕрешме пулатăп".

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва кăçал малтанхи хут комбайн çине ларнă комбайнерсем те активлăн хутшăнаççĕ. Çамрăк комбайнер А. Сорокин хăйĕн комбайнĕпе кăçал çулталăкри икĕ норма чухлĕ тырă пухса кĕме обязательство илчĕ. Вăл хăйĕн комбайнĕпе 110 гектар тырă вырса кĕртмелле пулсан, 220 гектар çинчи тырпула пухса кĕртессишĕн кĕрешет.

И. ШИРОВ,
МТС директорĕ.

Пăрса-ясмăк çулаççĕ

КАЛИНИНО, августăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Çĕньял Явашри „Çĕньял" колхоз членĕсем июлĕн 31-мĕшĕнче тырă вырса пĕтерчĕç. Халĕ колхозниксем пăрса-ясмăк çулаççĕ. Хăвăртрах авăн çапса государствăна тырă парса татма васкаççĕ.

Тырă вырнă çĕрте уйрăммăн коммунист А. Ершов ертсе пыракан бригада тимлĕн ĕçлерĕ. Кунта колхозниксем тырра тикĕс, пĕр тăккаламасăр вырса пуçтарчĕç. Бригадăр Ершов хăй те колхозниксемпе пĕрле тырă вырса агитациллĕ-массăллă ĕçе ертсе пычĕ. Стена хаçачĕсем кăларас тĕлĕшпе тата колхозниксем каннă вăхăтра хаçатсем вуласа парас тĕлĕшпе Н. Владимиров комсомолец тăрăшса ĕçлерĕ.

В. ЗАЙЦЕВ.

Колхозсенчи яслисем

ТĂВАЙ. Вăтаялĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра тырă вырма тухнă чухне ачасем валли ясли ĕçлет. Ясли заведующийĕ А. Масленникова ачасене пăхас ĕçе лайăх организациленĕ. Ачасене воспитани парас енĕпе К. Борисова ĕçлет. Вăл ачасене тĕрлĕрен вăйăсем выляттарать, çăл патне çăвăнма илсе каять. Колхоз яслийĕнче ачасем валли вылямалли япаласем нумай илсе панă.

Ясли йĕркеллĕ ĕçлесе пыни колхозницăсен ĕçри хастарлăхне ÿстерет.

Г. ФИЛИППОВ.

ИР-ИРЕХ ТУХСА СĔМ ТĔТТĔМЧЧЕН ĔÇЛЕÇÇĔ

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Калиновкăри Калинин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсем ыраш вырнă çĕрте нихăçан пулман хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Колхозниксем Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн приказне ĕçпе ответлеççĕ. Колхозра ĕçлеме пултаракан 105 колхозникрен пурте ĕçе ир-ирех тухса сĕм тĕттĕмччен ĕçлеççĕ. Кунта нормăна тултарман колхозниксем пачах та çук. Пелагея Кузьмина, З. Михайлова, Н. Михайлова, Е. Яковлева колхозницăсем кулленхи нормăна 300 процент тултарса ĕçлеççĕ. Вĕсем июлĕн 31-мĕшĕнче пĕр кун хушшинче тырă вырнă çĕрте 4—5-шер ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

Колхоз ыраша 60 процент вырса пуçтарнă, тата икĕ кунтан ыраш вырса пĕтерсе çурхи тырăсене вырма тытăнаççĕ.

Колхозниксем тырпулсене пĕр тăккаламасăр выраççĕ. Кунта кашни тăваткал метр çинче 1—3 пучах çеç тăкăнса юлать. Вĕсене те 7—8 çулхи ачасем хыçранах пухса пыраççĕ.

— Ĕç дисциплинине çирĕплетме колхозри „Колхозник" стена хаçачĕ пулăшрĕ,—тесе каласа кăтартать колхоз председателĕ Татьяна Егорова.

Кунта стена хаçачĕ вăхăтра тата йĕркеллĕ тухса тăрать. Стена хаçачĕн редакторĕ комсомолка Вера Волкова юлташ стена хаçачĕсене уя колхозниксем ĕçленĕ çĕре илсе тухса вуласа кăтартать. Уборкăн малтанхи кунĕсенче Антонина Иванова колхозница ĕçе кая юлса тухатчĕ. Ăна стена хаçачĕ критикленĕ. Тепĕр кунне Иванова колхозница ĕçе ытти колхозниксенчен малтан тухрĕ. Вăл халь ытти колхозницăсемпе танах ĕçлесе пыма тытăнчĕ ĕç нормине яланах иртерсе тултарать.

Колхозра агитаторсем пулса Волковăпа Филиппова комсомолкăсем ĕçлеççĕ. Вĕсем кашни кунах колхозниксемпе пĕрле тырă выраççĕ, кану вăхăтĕнче хаçатсенчи çĕнĕ хыпарсене, Совет Информаци Бюровĕн сводкисене вуласа кăтартаççĕ.

А. Петровăпа А. Степанова бригадирсем колхозниксен ĕçне кашни кунах уйрăм шута илеççĕ. Вĕсем миçе ĕçкунĕ тунине ĕç пĕтнĕ хыççăнах каласа параççĕ.

Колхозниксене лайăх ĕçлеме пур майсене те туса панă. Вĕсене уя ĕçленĕ çĕре илсе тухса талăкра икĕ хут вĕри апат çитереççĕ. Ачасем валли ясли уçнă.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене срокра парса татассишĕн кĕрешет. Государствăна 1943 çулшăн аш-какай, сĕт-çу, çămарта, çăм парса татнă. Çак кунсенчех тырă памалли обязательствăсене те пурнăçлаççĕ. Паян колхозра авăн çапма тытăнчĕç.

В. ВЕСЕЛОВ.

Колхозниксем хирте ĕçлеççĕ, комсомолецсем ялта çÿреççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 5-мĕшĕ. («Чăваш Коммуни» корр., Телефонпа). [illegible]

Организацире 13 комсомолец. Вĕсенчен тăваттăшĕ çеç тырă вырма тухаççĕ. И. Степанов, В. Ильин, М. Дмитриев комсомолецсем тата ВЛКСМ организацин секретарĕ Никитин хăй те [illegible]

[illegible] шĕн мĕнле кĕрешни çинчен каласа памарĕ. Никитин юлташ çеç комсомолецсем [illegible]

[illegible] комсомолецсем уборкăра мĕнле ĕçлени çинчен сÿтсе яврĕç.

Пухăва хатĕрленмесĕр ирттернĕрен унта организацири комсомолецсенчен пĕри те уборкăра хăй мĕнле ĕçлени тата колхозри çитменлĕхсене пĕтерессишĕн [illegible] çинче ыраш кĕлтисем шатса калча ларнă.

ВЛКСМ Красноармейски райкомĕ çак çитменлĕхсене хăçанчен тÿссе пурăнĕ-ши?

С. ШАДИН.

Шилов бригади мала тухрĕ

ЕЛЧĔК. Каваллти «Комбайн» колхоз июлĕн 27-мĕшĕнче ыраш вырса пĕтерчĕ. Ку ĕçре 3-мĕш бригада мала тухрĕ. Ăна фронтран аманса килнĕ Аркадий Шилов пултаруллăн ертсе пырать. Мухтавлă фронтовик бригадăри колхозниксене ырми-канми ĕçлеме хавхалантарса пычĕ, бригадăна колхозра чи малти вырăна кăларчĕ. Уборка ĕçĕсене лайăх организацилесе ирттернĕшĕн Шилов ертсе пыракан бригадăна ялав панă.

Çак бригадăра Н. Дмитриева учительница звеноводка пулса ĕçлет. Вăлах агитатор. Дмитриева юлташ хирте ĕçлекенсене каннă вăхăтра тăтăшах юлашки хыпарсемпе паллаштарса тăчĕ, хаçатсем вуласа пачĕ. Бригадăра икĕ кунта пĕрре боевой листок тухса тăрать, хисеп хăми пур. Унта тырпулсене пухса кĕртнĕ çĕрте малта пыракансене çыраççĕ. Çакă вăл—колхозниксемпе колхозницăсене тăрăшса ĕçлеме хавхалантарчĕ. Александра Маркова машинăпа вырнă хыççăн кĕлте çыхнă çĕрте ĕçлерĕ. Вăл кулленех икĕ норма тултарса пычĕ. Куллен 0,33 гектар тыррине çыхмалла пулсан, вăл 0,70 гектар çыхрĕ.

Бригада çуртыррисене вырнă чухне те куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялава хăйĕн аллинчех тытса тăрассишĕн кĕрешет.

К. ДОБРОХОТОВА.

Çуртыррисем вырма тытăнаççĕ

ТĂВАЙ, августăн 5-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Кĕрхи тырăсене вырса пĕтернĕ колхозсен йышĕ кунран-кунах ÿссе пырать. «Çĕнĕ çул», Мичурин ячĕпе тăракан, «8-ое Марта», «Коммунар» тата ытти чылай колхозсем ыраш тата кĕрхи тулă вырса пуçтарчĕç, халĕ çуртыррисем выраççĕ.

Иртнĕ çулсенче ялхуçалăх ĕçĕсенче кая юлса пынă колхозсем те кăçал уборкăра ĕлкĕрсе пыраççĕ.

Типçырмари «Коммунар» колхоз уборка ĕçĕсене кăçал йĕркеллĕ туса пырать. Колхоз председателĕ отечественнăй вăрçă инвалидĕ И. Кондратьев юлташ колхозниксене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухнă. Ĕçе тухман е ĕç нормине тултарса пыман колхозниксем кунта пачах çук. Пурте пысăк çĕкленÿпе ĕçлеççĕ.

Çăмăрлă çанталăкра та ку колхозра ĕç чарăнмасть. Иртнĕ çăмăрлă кунсенче кунта витнĕ итемсем айĕнче кунĕ-кунĕпех авăн çапнă, государствăна тырă парас ĕç те чарăнса тăман. Итемсем патĕнче колхоз авăн (сушилка) туса лартнă. Авăнпа талăк хушшинче 16 урапа кĕлте типĕтеççĕ, типĕтнĕ тырра çийĕнчех çапаççĕ.

«Коммунар» колхоз, иртнĕ çулта кая юлнă колхоз пулнăскер, кăçал государство умĕнчи хăйĕн обязательствисене срокчен парса татать. Авăн çапас ĕçе аван организацилени вĕсем халĕ государствăна 60 центнер çĕнĕ тырă пачĕç те ĕнтĕ.

Енĕш-Нăрвашри «Красная Чувашия» колхозра та уборка ĕçĕсем организованно пулса пыраççĕ. Кĕрхи тырăсене 545 гектар вырса пуçтарчĕç, халĕ çуртыррисене вырнă çĕрте кулленех 11 жнейка ĕçлет, пур бригадăсенче те авăн çапма пуçланă. Государство умĕнчи [illegible] 580 [illegible] 30 [illegible]

[illegible] Ыттисем тырра тытса выртарма пуçланă. Аякри колхозсенчен тырă вырма 30 çынна тара тытнă. Çав вăхăтрах нумай колхозниксем ĕçе тухмасăр килĕсенчех ларнă. Тара кĕрешсе выракансем тырра питĕ тăккаласа вырнă, уйрăм участоксем çинче тăваткăл метрлă лаптăкра 35—40-шер пучах ÿксе юлнă.

А. КАХОВСКИЙ.

Сада тепĕр хут чĕртрĕç

КАЛИНИНО. Анат Карачурари «Социализм çулĕпе» колхоз 1940 çулта сиен тÿснĕ сада тепĕр хут чĕртрĕ: çырла йывăççисене çĕнĕрен лартрĕ, улма йывăççисен хăрнă турачĕсене касса çĕнĕрен сыпса юсарĕ. Халĕ садра хăмла çырли, хурлăхан, «китайка» текен улмуççисем ешĕл ÿсеççĕ. Иртнĕ çулта, вĕсен çимĕçне сутса, колхоз 8000 тенкĕ тупăш турĕ. Кăçал çырласем иртнĕ çулхинчен те нумайрах.

Б. ШОРНИКОВ.

Яланлăх комиссисен ĕçне лайăхлатассишĕн

Çак кунсенче ВЛКСМ Обкомĕн шкулсен отделĕ ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсенчи шкулсем енĕпе ĕçлекен яланлăх комиссисен председателĕсен канашлăвне ирттерчĕ.

Унта ВЛКСМ Центральный Комитечĕ кăçалхи июнĕн 21-мĕшĕнче «ВЛКСМ горкомĕсемпе райкомĕсенчи шкулсем енĕпе ĕçлекен яланлăх комиссисем çинчен» йышăннă постановление сÿтсе яврĕç.

Канашлура ВЛКСМ Шупашкар, Канаш, Улатăр горкомĕсен тата Вăрмар, Октябрьски, Калинино райкомĕсенчи шкулсем енĕпе ĕçлекен яланлăх комиссисен руководителĕсем хăйсен ĕç опычĕсемпе паллаштарчĕç.

ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсен шкулсем енĕпе ĕçлекен комиссийĕсен шкулсене тата унти комсомол организацийĕсене ĕçре пулăшса пымалла, лайăх ĕçлекен шкулсен опычĕсене юлса пыракан шкулсене парас енĕпе ĕçлемелле, райçутĕç пайĕсене тата шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕсене ĕçлĕн пулăшса пымалла.

ВЛКСМ Шупашкар горкомĕнчи шкулсем енĕпе ĕçлекен яланлăх комисси (председателĕ М. Михайлова юлташ) çирĕп план тăрăх ĕçлет. Комисси шкулсене çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрлеме, шкул вутти хатĕрлеме, шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренĕве явăçтарма тата эмел курăкĕсем пухма пулăшса пынă. Хулари шкулсем çуллахи каникул вăхăтĕнче 14 тоннăна яхăн эмел курăкĕсем пухнă. Шупашкарти 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕренекен Эльгер пĕччен 100 килограмм, 6-мĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕренекен В. Смирнов 425 килограмм пухнă. Комсомолецсемпе шкул ачисен вăйĕпе хулари шкулсем валли вутă чылай хатĕрленĕ. Кĕрхуннехи пĕлÿ тĕрĕслевĕсене хăварнă шкул ачисемпе занятисем йĕркеллĕ ирттереççĕ. Ача сачĕсем валли тĕрлĕрен вылямалли япаласем пухас енĕпе комисси ырă ĕç пуçарнă.

Çавăн пекех Вăрмар районĕнчи яланлăх комисси те (председателĕ Н. Бурмистрова юлташ) хăйĕн ĕçне тивĕçлипе туса пырать. Çуллахи вăхăтра колхозра ĕçлеме ятарласа шкул ачисен отрячĕсене организациленĕ. Унта пурĕ 4.111 ача, 32 ĕç отрячĕ шутланать. Вĕсене комсомолка-учительницăсем ертсе пыраççĕ. Чăраш Çырма, Арапуç шкулĕсенчи вĕренекенсен ĕç отрячĕсем уйрăмах лайăх ĕçлеççĕ. Аслă Чак тата Кивĕ Вăрмар шкулĕсенчи вĕренекенсен отрячĕсем кок-сагыз звенисенче хастарлăн ĕçлерĕç.

Вăрмар районĕнче шкул ачисем комсомолецсен пуçарăвĕпе каникул вăхăтĕнче 200 килограмм хăмла çырли, 3 тонна вĕлтрен, 1,200 килограмм чей курăкĕсем пухнă. 37 колхозра ача яслисем ĕçлеççĕ.

Канашлу ВЛКСМ горкомĕсемпе райкомĕсенчи шкулсем енĕпе ĕçлекен комиссисен ĕçĕнче чылай çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Улатăр, Красноармейски, Çĕрпӳ районĕсенче аслă классенче вĕренекенсемпе учительсене комсомол ретне илес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Етĕрне, Пăрачкав, Октябрьски районĕсенчи детприемниксем тивĕçлипе ĕçлемеççĕ, вĕсенче çамрăк ачасене воспитани парас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Пионерсен лагерĕсенче канакан пионерсене ялхуçалăх ĕçне тата эмел курăкĕсем пухас çĕре пачах явăçтарман (Сĕнтĕрвăрри, Улатăр).

Прение Михайлова (Шупашкар), Барамыщникова (Канаш), Бурмистрова (Вăрмар), Бесчастнова (Улатăр), Иваницкая (Хĕрлĕ Чутай), Ефимова (Красноармейское), Николаева (Октябрьское), Григорьева (Калинино), Рубцова (Йĕпреç) юлташсем тухса каларĕç,

Канашлу вĕсленес умĕн ВЛКСМ Обкомĕн шкулсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Токарев юлташ тухса каларĕ. Вăл 1942—43-мĕш вĕренÿ çулĕн итогĕсем тата çамрăксене воспитани парас ыйтусем çинчен, шкулсем енĕпе ĕçлекен комиссисем умĕнче тăракан задачăсем çинчен чарăнса тăчĕ.

— ВЛКСМ райкомĕсемпе çутĕç пайĕсем тата шкул директорĕсемпе учительсем пионер организацийĕсене кирлĕ пек ертсе пымаççĕ—тет Токарев юлташ.—Çĕрпӳ районĕнчи Ивановăри тулли мар вăтам шкулта (директорĕ Максимова юлташ) пионер тата комсомол организацийĕсем пачах çук. Шкулта вĕренÿ пахалăхĕ тивĕçлĕ вырăнта мар. VII-мĕш класра вĕренекенсен 50 проценчĕ, VI-мĕш класра вĕренекенсен 62 проценчĕ кăна вĕренÿре ĕлкĕрсе пынă.

Шăхасан районĕнчи Шуркасси вăтам шкулĕнче иртнĕ вĕренÿ çулĕнче 144 ача шкул тулашĕнче тăрса юлнă. Всеобуч законне Етĕрне районĕнчи шкулсенче те пăснă.

Çак тĕслĕхсем ВЛКСМ райкомĕсем тата шкулсем енĕпе ĕçлекен комиссисем начар ĕçленине çирĕплетсе параççĕ.

Канашлу ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсенчи шкулсем енĕпе ĕçлекен яланлăх комиссисене ĕçри çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтерессишĕн çине тăрса кĕрешме хушса хăварчĕ.

Тăшманăн подводнăй лодкисемпе кĕрешни. **Укерчĕк çинче:** Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче подводнăй лодкăсемпе кĕрешме тунă глиссер. Вăл сехетре 80 километр таран каять. Ун çинче çакăн пек хĕçпăшалсем пур: тарăна пăрахмалли 4 бомба, пĕчĕк калибрлă тупă тата пулемет. Кирлĕ пулсан ăне пысăк карап çине хăпартса тартма пулать, кайран каллех шыва антарса яма пулать.

Ют çĕршывсенче

Сицилири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Америка войскисем Троинăна тытса илнĕ хыççăн тăшманăн Сицилири оборона линийĕн пĕтĕм çурçĕрти пайĕ каялла чакнă. Америка войскисен малти пайĕсем Троинăпа Мистретта хушшипе тăшман флангне инçене кайса тухнă.

Çыранри çул çинче ларакан Каронийăна йышăнса илнĕ.

Союзниксен войскисем çавăн пекех 8-мĕш армин сулахай флангĕнче те чылаях малалла куçнă. Кунта тăшман хаяррăн хирĕç тăрать.

Тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисем стратегиллĕ высотасене штурмласа тытса илнĕ. Ку высотасем темиçе кун маларах йышăнса илнĕ Аджира хули патĕнче пит усăллă позицисем пулса тăраççĕ.

СОЮЗНИКСЕН ВĂТАÇĔР ТИНĔС БАССЕЙНĔНЧИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, августăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: августăн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен крейсерĕсемпе эсминецĕсен флотилийĕ Вибо-Валентия порчĕ çине пенĕ. Ытти суднăсем çыранри чугунçулăн Олива юханшывĕ урлă выртакан кĕперне пенĕ, вăл кĕпер Вибо-Валентирен 35 километр çурçĕртерехре. Ĕнер ирхине акăлчансен крейсерĕсемпе эсминецĕсем Кăнтăр Итали çыранĕнчи Кротоно çине хаяррăн пенĕ.

Июлĕн 31-мĕшĕнче союзниксен йывăр бомбардировщикĕсем Реджо-ди-Калабрири чугунçул сооруженийĕсене тапăннă.

ПОРТУГАЛИРИ ХÿМХАНУСЕМПЕ ЗАБАСТОВКĂСЕМ

ЛОНДОН, августăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 26-мĕшĕнче Португалин промышленноçлă районĕсенче халăх хумханма тытăннă, забастовкăсем пуçланса кайнă. Забастовкăсене темиçе вунă пин рабочи хутшăннă.

Забастовка пулнă промышленноçлă районсене Португали влаçĕсем хĕçпăшаллă отрядсем янă. Лисабон хулинче урамсенче пулеметсем лартса тухнă. Хулара утлă çар отрячĕсем çÿреççĕ. Полици халăха йышлăн тыта-тыта хупать. Баррейро тата Алмада ятлă промышленноçлă районсенче тытса хупнă темиçе пин рабочие хуларан урăх çĕре кăларса кайнă. Халăх кунран та хăраса тăман, хулара çаплах вăйлă демонстрацисем тунă, демонстрацисене халăх йышлăн тухнă.

Июлĕн 29-мĕшĕнче Португали влаçĕсем çапла пĕлтернĕ: забастовкăна хутшăнакансене малашне пурне те «наци службин рабочи корпусĕ» текен чаçа мобилизацилеççĕ, вара вĕсене пурне те йывăр ĕçе яраççĕ. Шалти ĕçсен министрĕ июлĕн 30-мĕшĕнче пур фабрикăсене те хупмалла тунă, наци экономикине кирлисене кăна хупмаççĕ.

ЛОНДОН, августăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Ньюс кроникл» ятлă хаçат Португалири забастовкăсемпе хумханусем çинчен ăнлантарса панă май çапла çырать: Португалири рабочисене экономика тĕлĕшĕнчен илсен, вĕсем тăраниччен апат çиме кураймаççĕ, ĕçукçи вĕсене питĕ сахал тÿлеççĕ. Испани чикки урлă продовольстви тиенĕ вагонсем чугунçулпа Германие кайса тăнине курсан, вĕсем пăлханаççĕ... кÿçкĕретĕнех курса тăрса рабочисем питĕ тарăхса çитнĕ. Нумай пулмасть Çурçĕр Португалири чылай ялсенче выçă пăлханусем пулса иртнĕ, вĕсене вăйпа пусарса лартнă. Çĕршыври çитменлĕхсем пирки Португали халăхĕ пур çĕрте те питĕ тарăхса çитни Салазар диктаторпа Португалин президенчĕ Кармона хушшинчи хирĕçÿсене вăйлатса янă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ПЛОЕШТИ РАЙОННЕ ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, августăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ĕнер кăнтăрла Америка бомбардировщикĕсем Плоешти районĕнчи нефть тасатакан заводсене хаяррăн тапăннă. 160 метр çÿллĕшĕнчен 300 тонна ытла бомба пăрахнă, вĕсенчен нумайĕшĕ тăрăхла çурăлса каякансем. Тапăнăва 175 самолет ытла хутшăннă. Калла-малла самолетсем 3.800 километр ытла тунă.

Çак тапăну пирки тăшманăн нефть тасатакан завочĕсен пысăк пайĕ пĕтсе ларнă тесе шутлаççĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Плоештин Америка авиацийĕ тапăннă районĕ Германие кирлĕ мĕнпур нефтĕн 35 процентне парса тăнă.

КАНАДĂПА АМЕРИКА ВОЙСКИСЕМ АНГЛИЕ ÇИТНĔ

ЛОНДОН, августăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англи порчĕсенчен пĕрне Канада войскисем çитнĕ. Канадăран Англие вăрçă пуçланнăранпа та войскăсем кун пек йышлăн пыни пулман. Вĕсен составĕнче парашютистсем чылай, артиллери, пехота чаçĕсем тата мотомеханизированнăй корпус пур.

Çакăнпа пĕрлех Америка войскисен çĕнĕ йышĕ çитни çинчен пĕлтернĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

августăн 2-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун саслă илемлĕ

В старом Чикаго

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Часах

НЕУЛОВИМЫЙ ЯН

ятлă фильм кăтартма пуçлаççĕ.

МУСКАВРИ ГИДРОТЕХНИКА ИНСТИТУЧĔ

(Сĕнтĕрвăрринчи отделенийĕ)

1943—44-мĕш вĕренÿ çулĕ умĕн 1-мĕш курса студентсем илесси çинчен пĕлтерет.

Институтăн 1-мĕш курсĕнче вĕренме илнĕ студентсене 1943—44-мĕш вĕренÿ çулĕнче Сĕнтĕрвăрринчи çĕр йĕркелÿпе мелиораци техникумĕнче Мускаври гидротехника институчĕн профессорĕсемпе преподавателĕсем вĕрентеççĕ, 2-мĕш курсран пуçласа Мускавра вĕренмелле пулать.

Институт пысăк квалификациллĕ инженер-гидротехниксене вĕрентсе кăларать. Вĕсем çак ĕçсене аван пĕлекенсем пулса тухаççĕ: гидроэлектростанцисем, гидротехника сооруженийĕсем, насос станцийĕсем, шыв пăркисем, çил арманĕсем тума, çĕре пăраласа типĕтерме, мелиораци ĕçне, торф кăларма пĕлекенсем пулса тухаççĕ. Институт çавăн пекех тата гидромелиораци техникумĕсем валли педагогика кадрĕсем хатĕрлет.

Вăтам шкулсенчен, рабфаксемпе техникумсенчен 1941, 1942-мĕш çулсенче „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе вĕренсе тухнисене 1-мĕш курса экзаменсăрах илеççĕ. Ыттисене экзаменпа илеççĕ. Экзамен çак предметсемпе пулать: математика, физика, хими, вырăс чĕлхипе литература.

Экзаменсем сентябрь уйăхĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа 30-мĕшĕччен пыраççĕ.

Вĕренме октябрь уйăхĕн 1-мĕш числинче пуçлаççĕ.

Студентсем валли лайăх столовăй пур, институтăн хăйĕн продовольстви базиı, вĕренÿ оборудованийĕ пур.

Вĕренме кĕнĕ студентсем валли хваттер пур, выртса тăма вырăн-минтерсем параççĕ. Вĕренÿ отличникĕсене тата Хĕрлĕ Çартан чирлесе таврăннисене стипенди параççĕ.

Тĕплĕрех пĕлес тесен, Сĕнтĕрвăрринчи земтехникум канцелярийĕнчен ыйтса пĕлес пулать.

Вĕренме кĕме çырнă заявление тата тивĕçлĕ документсене çак адреспа ямалла: гор. Мариинский Посад, Чувашской АССР, Земтехникум.

ИНСТИТУТ ДИРЕКЦИЙĔ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1091 ... промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. б. 53 84 п. л.